


# Вут‑çулăмра çуралнă кĕнеке

Леонид Агаковăн
«Ылтăн вăчăра» повеçĕн
историйĕ



# Леонид Яковлевич Агаков

(1910-1977)

**чăваш халăх çыравçи, пирĕн чаплă ентеш çуралнăранпа 100 çул çитрĕ**

# Леонид Агаков

1925-1927 çулсенче

Етĕрнери педагогика техникумĕнче вĕреннĕ



Леонид Агаков

1941-1944 çулсенче Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче малтан рота командирĕ пулса, кайран дивизи хаçачĕн корресподенчĕ пулса çапăçать

# 1943 çул

- Сентябрĕн 30-мĕшĕнче эпĕ(Л.А) хамăн дневнике çапла çырнă: «Терюха ялĕ. Терехов р-нĕ. Гомель облаçĕ. Ĕнер нихçан курманнине куртăм…Ку ялта нимĕçсем вăтăр сакăр ял çыннине пухса пĕр пўрте хупнă та чўрече витĕр шалалла граната ывăтнă, пўртне çунтарма тытăннă. Çынсем алăка çĕмĕрсе сике-сике тухнă. Вара вĕсене кил хушшинче хăшне персе вĕлернĕ, хăшне чиксе пăрахнă, унтан вутта пăрахса çунтарнă. Хам куçпа куртăм çунса кăмрăкланнă çынсен кĕлеткисене. Пурте пур унта – ватти те, вĕтти те. Ах, тискер-çке! Акт çыртăмăр.

- Обер-ефрейтор вермахта Иоганнес Гердер писал в своем дневнике в первые месяцы пребывания на белорусской земле: «25 августа. Мы бросаем гранаты в жилые дома. Дома очень быстро горят. Огонь перебрасывается на другие избы. Красивое зрелище! Люди плачут, а мы смеемся над слезами. Мы сожгли таким образом уже деревень десять. 29 августа. В одной деревне мы схватили первых попавшихся 12 жителей и отвели на кладбище. Заставили их копать себе просторную и глубокую могилу. Славянам нет и не может быть никакой пощады. Проклятая гуманность нам чужда».

Тепĕр темиçе кунтанах «Совет патриочĕ» дивизи хаçатĕнче Л.Агаков çырнă «***Убийцы***» ятлă очерк пичетленсе тухать.

Леонид Яковлевич курни - илтни çинчен манаймасăр «***Персе вĕлернĕ ача***» повесть сыпăкĕсене çырма пуçлать.

Генрих Шварц сăнарĕ уçăмлансанах повеçе «***Ылтăн вăчăра***» тесе ят парать.

Çак повесть сыпăкĕсене çырнă вăхăтра  Хатынь ятлă белорус ялĕнче хăрушă трагеди пулса иртет…

## Хатынь

Нимĕнле географи картти çинче те эсир ку белорус ялне тупаймăр. Фашистсем ăна 1943 çулта  ял ç ыннисемпе пĕрле çунтарса янă.

Вутра 149 ял çынни, вĕсенчен 75 ача çунса кайнă.

3 çын кăна чĕрĕ юлнă






Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче Раççей, Украина тата Белорусси территорийĕ çинче фашистсем 30 пин ытла хулапа яла, çĕршер пин мирлĕ çынна пĕтернĕ. Фашистсене хирĕç 3 пине яхăн партизан отрячĕ çапăçнă. Вĕсенче 16 çула çитмен ачасем те тăшмансене май килнĕ таран тавăрма пулăшнă.

1944 çулта Совет çарĕ Украинăна, Белоруссие, Литвана, Латвие ирĕке кăларнă. Çав вăхăтра Леонид Агаков аманса киле таврăнать, чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕнче ĕçлеме пуçлать. 1946 çулта «Ялав(Знамя)» журналăн пĕрремĕш номерĕсенчех «Ылтăн вăчăра» повесть пичетленме пуçлать. Журнал тиражĕ 2 хут ÿсет.

1948 çулта «Ылтăн вăчăра» уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать.
62 çул хушшинче ăна 12 хут чăвашла та, вырăсла та пичетлеççĕ.
Пĕтĕмĕшле тиражĕ 150 пине çитнĕ.

Леонид Агаков 50 произведение яхăн çырнă. Унăн кĕнекисен тиражĕ 500 пине çитнĕ.

Леонид Яковлевич – чăваш бестселлĕрĕсен авторĕ. Унăн хайлавĕсене миллионшар çын юратса вулать.

Унăн произведенийĕсем Тăван çĕршыва юратма, йывăрлăхсене çĕнтерме, пĕр-пĕрне пулăшма вĕрентеççĕ.

# Салтак эп пулнӑ

Георгий Орлов

*Салтак эп пулнӑ. Пулнӑ эп мишень.*
*Эп пенӗ пӑшалпа. Мана те пенӗ*
*Пӗччен те — вӑрттӑн, харӑс — темиҫен*
*Ҫӗрле те, кӑнтӑрла та хирӗҫ енӗ.*

*Тустарнӑ тыррӑма таптакана,*
*Вутта хуракана ватта-вӗтте те,*
*Ял-хулана, ҫынна, саманана*
*Инкек кӳрекене ҫех пур ҫӗрте те!*

*Хура хӗреслӗ выҫкӑн ҫӑткӑна*
*Шывра та, ҫӗр ҫинче те эп тыллanӑ.*
*Сыхланӑ Паяна эп, Ырана,*
*Тӑван сасса, тӑван юрра сыхланӑ.*